# НИКАМА ТА МАНМАН, НИМĔН ТЕ МАНĂÇМАН

## «Палăксем упраннă чух вĕсем чĕрĕ»



Хорнуй ял тăрăхĕнчи Мăн Шаптак ялĕнче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннисене асра тытса палăк лартрĕç. Ырă ĕçе вырăнти çынсем тăрăшнипе, Владимир Паладьев предприниматель пуçарнипе тата пулăшнипе тума май килнĕ. Чыслă ĕçĕн пĕлтерĕшĕ пĕрре – çак ялта пурăнакан кашни çыннăн çывăх çынни çак хăрушă вăрçа хутшăннă, чылайăшĕ пуçне хунă, вĕсене асра тытасси те – кашнин тивĕçĕ. Владимир Дмитриевичăн та аслашшĕ Мăн Шаптак ялĕнчен, вăл фронтра Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ.

Ял çыннисем хăйсен ĕмĕтне иккĕмĕш тĕнче вăрçи вĕçленни 75 çул çитнĕ тĕле вăя кĕртме пултарчĕç. Шăпах çавăн чухлĕ çул каялла сентябрĕн 2-мĕшĕнче Токийск бухтинче американецсен «Миссури» линкорăн бортĕнче Японие капитуляцилени пирки калакан акт çине алă пуснă.

– 27 миллион ытла совет салтакĕ хăйĕн кун-çулне çак мирлĕ пурнăçшăн панă. 1945 çулхи майăн 9-мĕшĕнчи çĕнтерӳллĕ кунран пуçласа вĕсен тĕслĕхĕ çинче çамрăк ăру воспитани илет. Эпир асра тытнă чух, çак палăксем упраннă чух, вĕсем чĕрĕ, – терĕ Чăваш Республикин гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ĕçĕсен патшалăх комитечĕн ертӳçи В. Петров Мăн Шаптак ялĕнчи палăк умĕнче.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ М. Колесникова ял çыннисене ял тăрăхĕн пурнăçĕнче пуçаруллă пулнăшăн тав турĕ. Митингра уйрăм тав сăмахĕ тыл ĕçченĕсене пулчĕ, Аслă Çĕнтерĕве çывхартассинче вĕсен те тӳпи пысăк пулнă. Вăрçăра тата ун хыççăн пуç хунисене шăплăх минучĕпе аса илчĕç, палăк умне чечексем хучĕç, вăрçă çулĕсенчи юрăсене юрларĕç.

## Йывăрлăха парăнман

Салтак пурнăçĕ тата Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи ветерансемпе вăрçă ачисен куçĕпе... Кунта кашни асаилӳ вăл е ку йывăрлăхпа çыхăннине пытараймăн. Аслă ăрури ентешсен паттăрлăхне пирĕн те манас марччĕ. Çамрăклах алла пăшал тытса, ĕç тиркемесĕр вăй хурса, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин фронтĕнче тата тылра мире хӳтĕленĕ салтаксемпе тыл ĕçченĕсем çакна уйрăмах тивĕç.

Истори страницисене уçса пăхсан Тюринсен йăхĕ Шурчара пĕр ăру çеç мар. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри, хутла пĕлнĕрен, ĕлĕкрех вулăсра та ятлă çынсем пулнă. Тăван çĕршывăн 1941 – 1945 çулсенчи Аслă вăрçине те асăннă йăх йышлăн хутшăннă. Фронтран 1910 çулта çуралнă Константин çеç сывă таврăннă. Паян унăн çемье пурнăçĕпе кĕскен паллашар-ха. Сăн ӳкерчĕкре эсир Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă Нинăпа Константин Тюринсене куратăр.

Малтанах çемье пуçĕ Константин Алексеевич пирки. Унăн ашшĕ, мăшăрĕ пурнăçран ир уйрăлнăран, 4 ачине пĕчченех ура çине тăратнă. Çавăнпа та Костя ачаран ĕçпе туслă ӳснĕ. Амăшĕ пулман пирки вăл ачаллах ашшĕшĕн пысăк тĕкĕ пулса тăнă. Арçын ача хăй тĕлленех платник ĕçне алла илнĕ, пичкесемпе каткасем ăсталама вĕреннĕ, çăматă йăваланă, пыл хурчĕ ĕрчетессине алла илнĕ. Вăл ӳснĕ вăхăтра колхозсем йĕркеленнĕрен пĕрлешӳллĕ хуçалăх ĕçĕнче те вăл ырă енчен çеç палăрнă: ял çыннисем валли армана çăнăх авăртнă, пилорамăра йывăç çурнă т. ыт. те.

1939 çулта çар ретне тăнă Константин пирĕн çĕршыва фашистла Германи вăрçăпа тапăнсан та малтисен ретĕнче тăшмана хирĕç тăрса хаяр çапăçусене хутшăннă.

Мирлĕ пурнăçра ĕçпе палăрнă пирĕн ентеш фронтра та çын хыçне пытанман. РФ Хӳтĕлев министерствин сайтĕнче тупнă хутсем унăн паттăрлăхне уçса параççĕ. Пĕрремĕш Украина фрончĕн телефонпа телеграф станцийĕн 54-мĕш ротин рядовойне Константин Алексеевич Тюрина çар чаçĕн командирĕ С. Кушков капитан патшалăх наградине илме тăратнă хутран: «Тюрин К. А. çарта 1939 çултанпа. Фронтра малтанхи кунсенченех. Татăлнă çыхăну линийĕсене сыпса хамăр чаççем хушшинчи çыхăнăва вăхăтра йĕркелесе тăрассипе тăтăшах паттăрлăхпа пуçарулăх кăтартать. Кижа районĕнче тăшманăн вут-çулăмĕ айĕнчех К. Тюрин темиçе юпа çине хăпарса тата арканнă юпасем патĕнчи çыхăнăва питĕ хăвăрт йĕркелерĕ. Çавăнпа вăл «Çапăçури тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» медале тивĕç».

К. Тюрин вăрçă вĕçленнĕ хыççăн та çарта 1945 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕччен тăнă. Яла таврăнсанах ĕнерхи фронтовик пĕр ялта çуралса ӳснĕ Нина Ярабаевăпа çемье çавăрнă. Сăмах май, Нина Михайловна та – фронтовичка. 1942 çул пуçламăшĕнче ăна пĕр ялта çуралса ӳснĕ Ольга Игнатьевăпа çар комиссариачĕ контролер-регулировщиксен курсне вĕренме янă. Ун хыççăн – фронта. Пирĕн ентешсем Ленинград блокадине лекнĕ. 190-мĕш уйрăм çул-йĕр батальонĕнче служба тивĕçĕсене пурнăçласа автоколоннăсен çулне йĕркелесе тăнă вăхăтрах Нинăн пĕрре мар çар заданийĕсене пурнăçласа кирлĕ хутсене тивĕçлĕ вырăна çитерме тивнĕ. Приказа пурнăçласа пăрлă шывра та пĕрре мар пулнă вăл, анчах йывăрлăха парăнман – хутсене штаба вăхăтра çитернĕ. Çавăншăн паттăр хĕр медаль-орденсене пĕрре мар тивĕçнĕ.

Фронтран чĕрĕ таврăннă Нина Михайловна малтанах Шурча шкулĕнче вĕренекен ачасене çар пĕлĕвĕ парассипе тăрăшнă. Ун хыççăн пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн тĕрлĕ ĕçĕнче вăй хунă. Мăшăрĕпе шăкăл-шăкăл пурăнса вĕсем 2 ывăлпа 2 хĕр çуратса ӳстернĕ: Георгий, Алевтина, Христина, Николай. Вăрçăри терт-нушана пула ревматизмпа чирленĕ Нина Михайловна 1985 çулта вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Константин Алексеевич вара 94 çул тултарсан 2004 çулта пурнăçран уйрăлнĕ. Паян çак ăрури çамрăксем ашшĕ-амăшĕн, аслашшĕ-асламăшĕн, ватă аслашшĕпе ватă асламăшĕн ятне ялан çӳлте тытма тăрăшаççĕ.

**Т. АНДРЕЕВА,**
**вĕрентекен.**



*Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.*

**Сăн ӳкерчĕксем айăпласçĕ**

## Атапайăн «илемлĕ» вырăнĕсем

Ялсенче йăлари çӳпĕ-çапă пухасси, турттарса тухасси йăлана кĕрсе çитрĕ темелле. Çак çĕнĕлĕх, вăл шутра услуга хакĕ, çынсене малтанласа чылай калаçтарчĕ. Халĕ ку енĕпе шăв-шав лăпланчĕ. Санкциллĕ мар свалкăсене пĕтерес ĕçе хăш-пĕр ялта туса ирттерчĕç.

Ялсене тăтăшах тухма тивет, хăшĕнче тирпейлĕ, контейнер аяккисенче таса, теприсенче вара контейнер урлă каçса кайнă, йĕри-тавра тем те пур. Атапай ялне те çитмелле пулчĕ, унта йăлтах йĕркеллĕ тесе калаймăн. Пĕр контейнер лаптăкĕнче йывăç тураттисен купи чылай вăхăт выртни лайăххах курăнать.



Паллах, йăлари çӳпĕ-çапă турттаракан автомашина вутă-шанкă тиеме тивĕç мар. Туратсене тухса пăрахакан питĕ тирпейлĕ çын мĕн çинчен шутланă-ш? Е вăл ун йышши машинăна пачах та курман тата ун çине мĕн тиесе турттарнине те пĕлмест пулас.

– Ку туратсем виççĕмĕш уйăх выртаççĕ. Ял çыннисем çак ĕçе кам тунине те пĕлеççĕ, çакна çав çыннăн айăпа ăнланса илсе тасатмалла, çитменнине вăл лаптăк унăн харпăрлăхĕ мар, обществăлла вырăн. Ял тăрăхĕн пуçлăхне В. Пушковăна çакăн пирки каланă, вăл çав çынна асăрхаттарма, тасаттарма тивĕç, – терĕ ялти пуçаруллă çын А. Садовников.

Ял çумĕнчи «илемлĕ» тепĕр вырăна – санкциллĕ мар свалкăна çитсе куртăм. Унта малтан вырăнти «Оринино» хуçалăхăн хранилищи пулнă.

– Тăршшĕ 10 метра, сарлакăшĕ 6 метра яхăн, кунти çӳпĕ-çапă талккишпе 20 çул хушши пухăнса пынăскер, тарăнăшĕ 1 метр ытла пулĕ. Çакна тасатмалли пирки хăçантанпа калаçатпăр, ответлă ĕçченсем пурте пĕлеççĕ, никам та тапранмасть. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ çакăн пирки лайăх пĕлсе тăрать, ĕçĕ вара курăнмасть. Хальхи вăхăтра çавăн пек свалка пулмалла мар, тахçанах пĕтермелле вĕсене, халĕ ăна валли контейнерсем пур, – пăшăрханăвне пытармарĕ А. Садовников.

Тасалăх ыйтăвĕ тавралăх илемĕпе кăна мар, сывлăх управĕпе те çыхăннă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**сăн ӳкерчĕкĕсем.**

